28-мĕш çул тухăть. Хакĕ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
24
ЫТЛАРИКУН
78(6829) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлăнĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

Фронт штабĕн начальникне

Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ОДЕР шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдармсем çинчен наступлени пуçласа ярса, артиллерипе авиаци йышлăн тапăнса пулăшнипе, нимĕçсен БЕРЛИН хулине хĕвелтухăç енчен хăтĕлесе тăракан вăйлă çирĕплетнĕ, шалалла инçете каякан обороннине татнă та 60 километртан пуçласа 100 километр таран малалла куçнă, ОДЕР çинчи ФРАНКФУРТ хулине, ВАНДЛИЦ, ОРАНИЕНБУРГ, БИРКЕНВЕРДЕР, ГЕННИГСДОРФ, ПАНКОВ, ФРИДРИХСФЕЛЬДЕ, КАРЛСХОРСТ, КЕПЕНИК хулисене туртса илнĕ. Германи столицине БЕРЛИНА вăркăнса кĕрсе кайнă.

Нимĕçсен обороннине татасшăн çапăçнă чухне тата БЕРЛИН хули çине наступлени туса пынă çĕрте çаксем чапа тухнă: КУЗНЕЦОВ генерал-полковникăн, БЕРЗАРИН генерал-полковникăн, ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, ПЕРХОРОВИЧ генерал-лейтенантăн, поляксен ПОПЛАВСКИЙ генерал-лейтенантăн 1-мĕш армин, БЕЛОВ генерал-полковникăн, КОЛПАКЧИ генерал-полковникăн, ЦВЕТАЕВ генерал-полковникăн, БУКШТЫНОВИЧ генерал-майорăн, КУЩЕВ генерал-майорăн, БЕЛЯВСКИЙ генерал-майорăн, ЛУКЬЯНЧЕНКО генерал-лейтенантăн, РОТКЕВИЧ генерал-майорăн, ПУЛКО-ДМИТРИЕВ генерал-лейтенантăн, ВЛАДИМИРСКИЙ генерал-майорăн, ОРЛЕАНСКИЙ, генерал-майорăн, ПЕРЕВЕРТКИН генерал-майорăн, КАЗАНКИН генерал-лейтенантăн, ФИРСОВ генерал-майорăн, ЖЕРЕБИН генерал-лейтенантăн, РОСЛЫЙ генерал-лейтенантăн, ГЛАЗУНОВ генерал-лейтенантăн, РЫЖОВ генерал-лейтенантăн, артиллери генерал-майорĕн ХЕТАГУРОВĂН, ПОЗНЯК генерал-лейтенантăн, АНДРЕЕВ генерал-лейтенантăн, АНАШКИН генерал-майорăн, СИЯЗОВ генерал-майорăн, ХАЛЮЗИН генерал-лейтенантăн, ВЕРЖБИЦКИЙ генерал-майорăн, БЕВЗЮК генерал-майорăн, КЕНЕВИЧ генерал-майорăн, СУРЖИЦ полковникăн, ЗАЙКОВСКИЙ полковникăн, ШЕЙПАК полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НАДЫСЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн КОСЕНКАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ПОЖАРСКИН, артиллери генерал-майорĕн МОРОЗОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МОДЗЕЛЕВСКИН, артиллери генерал-майорĕн ЕГОРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЛАСКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ФРОЛОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ИГНАТОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн РОЖАНОВИЧАН, артиллери генерал-майорĕн ЛИХАЧЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЗЕРНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЗРАЖЕВСКИН, артиллери генерал-майорĕн БОГДАНĂН, МИХАЙЛОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн СЕРЕГИНĂН, ПАСЬКО полковникăн, КОРЧАГИН полковникăн, ПИСАРЕВ полковникăн, ЖИГАРЕВ полковникăн, КОБРИН полковникăн, БЛОНСКИЙ полковникăн, ВИКЕНТЬЕВ полковникăн, ЛЯШКО полковникăн, артиллери генерал-майорĕн КЕРПАН, СОКОЛОВ полковникăн, ГОРКУН майорăн, ДОРОЖКИН подполковникăн, БАДАЕВ майорăн, СКВОРЦОВ подполковникăн, МИХАЙЛОВСКИЙ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн БОГДАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-полковникĕн КАТУКОВĂН, РАДЗИЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ШАЛИНĂН, АНИСИМОВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВАЙНРУБĂН, НИКОЛАЕВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн КРЕТОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НИКУЛИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВЕДЕНЕЕВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КРИВОШЕИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ТЕЛЯКОВĂН, БАБАДЖАНЯН полковникăн, ДРЕМОВ генерал-майорăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КИРИЧЕНКĂН, ЮРЕНКОВ полковникăн, НАРУЦКИЙ полковникăн, ЕРЕМЕЕВ полковникăн, БАЧАКОШВИЛИ полковникăн танкисчĕсем; КОНСТАНТИНОВ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем; авиаци Главный маршалĕн НОВИКОВĂН, авиаци Главный маршалĕн ГОЛОВАНОВĂН, авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн БРАЙКОН, авиаци генерал-майорĕн КАРАВАЦКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн САВИЦКИН, авиаци генерал-майорĕн ДЗУСОВĂН, авиаци генерал-майорĕн СИДНЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ТОКАРЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИН, СУХОРЯБОВ полковникăн, БЕРКАЛЬ полковникăн, СТАЛИН полковникăн, авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВĂН, НАКОНЕЧНИКОВ подполковникăн, РАССКАЗОВ полковникăн, КАЛИНИН полковникăн, авиаци генерал-лейтенанчĕн БЕЛЕЦКИН, авиаци генерал-майорĕн СКОКĂН, авиаци генерал-майорĕн БОРИСЕНКĂН, ТУРЫКИН полковникăн, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТУПИКОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СЧЕТЧИКОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЦЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВĂН, КАРТАКОВ генерал-майорăн, авиаци генерал-майорĕн ГЛУЩЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн ЧЕМОДАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн НАБОКОБĂН, авиаци генерал-майорĕн БАЛАШОВĂН, авиаци генерел-майорĕн ТИХОНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн БЛИНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн МЕНЬШИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн БРОВКОН, авиаци генерал-майорĕн ШИРОКИЙĔН, ГОРЕВАЛОВ полковникăн, ЧУПИКОВ полковникăн, ГУСАРОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ПРОШЛЯКОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ФУРСĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТКАЧЕНКĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн МАРТИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн БОРДЗИЛОВСКИН, КОВАЛЕВ полковникăн, БЕЛЬСКИЙ полковникăн, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ХАРЧЕВИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВĂН, НЕДЗЕЛЬСКИЙ подполковникăн, МАСИК полковникăн, ЧИСТОВ подполковникăн, ПРУСС полковникăн, ЛЕСИН инженер-подполковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАКСИМЕНКĂН, ФАЛИН полковникăн, ЧЕРКАСОВ полковникăн, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн АКИМОВĂН, СОЛОВЬЕВ полковникăн, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн ЛИТВИНЕНКĂН, ВИННИК полковникăн, СМОЛИЙ полковникăн, ЗАХАРОВ подполковникăн, государство хăрушсăрлăх подполковникĕн ВАКИШĂН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен обороннине татнă чухнехи тата БЕРЛИН çине наступлени туса пынă чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе часçене орденсемпе награднăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 23-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс перçе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, вăл шутра поляксен ПОПЛАВСКИЙ генерал-лейтенант ертсе пыракан 1-мĕш армине те, БЕРЛИН патне татса кĕрсе кайнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, нимĕçсен обороннине татнă чухнехи тата БЕРЛИН çине наступлени туса пынă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕ. № 339.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабĕн начальникне

Арми генералне ПЕТРОВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени тума тытăнса, артиллерипе авиаци йышлăн тапăнса пулăшнипе, нимĕçсен НЕЙСЕ шывĕ çинчи вăйлăн тĕреклетнĕ тата шалалла инçете каякан обороннине татса кĕнĕ та 80 километртан пуçласа 160 километра çити малалла куçнă, КОТТБУС, ЛЮББЕН, ЦОССЕН, БЕЕЛИТЦ, ЛУКЕНВАЛЬДЕ, ТРОЙЕНБРИТЦЕН, ЦАНА, МАРИЕНФЕЛЬДЕ, ТРЕББИН, РАНГСДОРФ, ДИДЕРСДОРФ, ТЕЛЬТОВ хулисене туртса илнĕ тата, кăнтăр енчен пырса, Германи столицине БЕРЛИНА вăркăнса кĕрсе кайнă.

Кунпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем Дрезден енче ЭЛЬБА, КИРХАЙН, ФАЛЬКЕНБЕРГ, МЮЛЬБЕРГ, ПУЛЬСНИТЦ хулисене çапăçса тытса илнĕ тата ДРЕЗДЕНРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ЭЛЬБА шывĕ çине тухнă.

Нимĕçсен обороннине татса кĕресшĕн тата çӳлте асăннă хуласене туртса илесшĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ПУХОВ генерал-полковникăн, ЖАДОВ генерал-полковникăн, ГОРДОВ генерал-полковникăн, КОРОТЕЕВ генерал-полковникăн, поляксен СВЕРЧЕВСКИЙ генерал-лейтенант ертсе пыракан 2-мĕш армийĕн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, КОЛОМИНОВ генерал-майорăн, САНКОВСКИЙ генерал-майорăн, ДОНСКОВ генерал-майорăн, ЯМАНОВ генерал-майорăн, ГЛУХОВ генерал-лейтенантăн, ПУЗИКОВ генерал-майорăн, ЧЕЛОКМАНОВ генерал-лейтенантăн, ОНУПРИЕНКО генерал-майорăн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантăн, БАКЛАНОВ генерал-майорăн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантăн, МАРТИРОСЯН генерал-майорăн, РОГОЗНЫЙ генерал-майорăн, ЗЕЛИНСКИЙ полковникăн çарĕсем; БАРАНОВ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем; РЫБАЛКО генерал-полковникăн, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-полковникĕн НОВИКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн СТОГНИЙĔН, танковăй çарсен генерал-майорĕн БАХМАТЬЕВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БЕЛОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КОРЧАГИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн МИТРОФАНОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НОВИКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЕРМАКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ФОМИНЫХĂН, КАРЕЦКИЙ полковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал полковникĕн ВАРЕНЦОВĂН, артиллери генерал-лейтенантăн ЯРОВОЙĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛОСУХИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ДЗЕВУЛЬСКИЙĔН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КУБЕЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ФАУСТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МЕНТЮКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НИКУЛИНĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОЖУХОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ХУСИДĂН, артиллери генерал-майорĕн САНЬКОН, артиллери генерал-майорĕн КОЛЕСОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛЬКЕНШТЕЙНĂН, артиллери генерал-майорĕн КРАСНОКУТСКИН, артиллери генерал-майорĕн БИТЮЦКИЙĔН артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн СЛЮСАРЕВĂН, МАЦИН генерал-майорăн, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ЗАБАЛУЕВĂН, НИКИТИН полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн ГАЛИЦКИЙĔН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГУСЕВĂН, иженери çарĕсен генерал-майорĕн ВАРВАРКИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн СОКОЛОВĂН, ГЛЕЗЕР полковникăн, ПОДОЛЫННЫЙ полковникăн, БЕРЗИН полковникăн, КАМЕНЧУК полковникăн, ВЕРШИНИН полковникăн, ПОЛУЭКТОВ полковникăн, РАЗУМЕЕВ подполковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВĂН, сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн АХРЕМЕНКĂН, СИМХОВИЧ полковникăн, БОГОМОЛОВ полковникăн, ОСТРЕНКО полковникăн, БОРИСОВ полковникăн, ДОЛЕНКО подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен обороннине татса кĕрессишĕн тата малта асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе часçене орденсемпе награднăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 23-мĕшĕнче, 22 сехет те 30 минутра пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс перçе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, вăл шутра поляксен СВЕРЧЕВСКИЙ генерал-лейтенант ертсе пыракан 2-мĕш армине те, БЕРЛИН патне татса кĕнĕскерсене тата ЭЛЬБА шывĕ çине тухнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, нимĕçсен обороннине татса кĕнĕ чухнехи тата малта асăннă хуласене туртса илнĕ чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕ. № 340.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсен вăтăçĕрти ушкăнĕ ДРЕЗДЕН енче тата Берлин енче малалла тапăнса пынă.

ДРЕЗДЕН енче пирĕн çарсем ЛЮБЕНАУ, ДАМЕ, ШЛИБЕН, ЗОННЕВАЛЬДЕ, ФИНСТЕРВАЛЬДЕ, РУЛАНД, ЕЛЬСТЕРВЕРДА, ШВЕПНИТЦ, БУРКАУ, БИШОФСВЕРДА хулисене туртса илнĕ. Малтанăха палăртнă вăрăх, апрелĕн 17-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче ку енче пирĕн çарсем 10.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тытăнса илнĕ тата тăшманăн 96 самолет не, 150 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине ытла тытса илнĕ.

БЕРЛИН енче пирĕн çарсем БИЗЕНТАЛЬ, КАЛЬКБЕРГЕ, КЛЕЙНШЕНЕБЕК, ФРИДРИСХАГЕН, ФЮРСТЕНВАЛЬДЕ хулисене туртса илнĕ тата БЕРЛИНПА пĕрлешсе ларнă ГЛИНИККЕ, ЛЮБАРС, БЛАНКЕНФЕЛЬДЕ, РОЗЕНТАЛЬ, БУХХОЛЬЦ, КАРОВ, БЛАНКЕНБУРГ, МАЛЬХОВ, ВЕЙСЕНЗЕ, ХОЗНШОНХАУЕЗЕН, МАРЦАН, БИСДОРФ, МАЛЬСДОРФ, ШЕНЗЙХЕ, ФИХТЕНАУ, ВИЛЬГЕЛЬМСХАГЕН ялĕсене йышăннă.

Малтанăха палăртнă вăрăх, апрелĕн 17-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче ку енче пирĕн çарсем 13.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăнса илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем — 60, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем —100 ытла, хир тупписем—500 ытла.

ВЕНĂРАН çурçĕртерехре УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—ДРАСЕНХОФЕН, ОТТЕЛТАЛЬ, ВИЛЬДЕНДЮДБЕХ, НОЙДОРФ, АЛЬТЕНМАРКТ, МЕРКЕРСДОРФ, СИМОНСФЕЛЬД ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 156 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшпи çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 56 самолетне перçе ӳкернĕ.

Шкул ачисен Пĕтĕм Российăри ăмăртăвĕ

Орел облаçĕ садсемпе тата вăрмансемпе чапа тухнă. Нимĕç оккупанчĕсем кунта нумай вăрманă тата улма йывăççисене вут хутма касса пĕтернĕ.

Область халăхĕ çав пушă вырăнсене тепĕр хут йывăççем лартма йышăннă. Çак ĕçе пуçарса яракансем, Корсаков районĕнчи шкул ачисем пулнă. Кунта 4.500 ача вĕренет. Вĕсенчен кашниех 10 улмуççи тата 15 илемлĕ йывăç лартма пулнă. Йывăççем лартма лесничество виçĕ участок ӳнăрса панă. Шкул çумĕнчи участок çинче улмуççи сачĕсем тăваççĕ. Сырла таврашĕ ĕрчетмелли питомникĕсем тăваççĕ.

Çак пуçарăва РСФСР-ăн ытти облаçĕсенче те йышăннă. Нумай шкулсем, пионер дружинисем тата çамрăк натуралистсен станцийĕсем шкулсемпе больницăсен участокĕсенче, çулсем тăрăх тата урамсенче, парксемпе скверсенче çуркунне йывăççем лартма хатĕрленеççĕ. Çак ĕçсене лайăхрах организацилес тĕлĕппе РСФСР Наркомпросĕне СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесоохрана Пĕтĕм Российăри социализмлă ăмăртăва организацилеме йышăннă. Мала тухнă вĕренекенсене, шкулсене, пионер дружинисене, çамрăк натуралистсен станцийĕсемпе кружокĕсене укçаллă премисем памалла тунă.

«Вăрман кунне» массăллăн унвласа иттерме йышăннă. (ТАСС).

125 сахăр заводне юсаса хута янă

Ирĕке кăларнă районсенче сахăр заводчĕсем пĕрин хыççăн тепри ĕçе кĕрсе пыраççĕ. Киев, Кировоград, Каменец-Подольск, Винница тата Сумы облаçĕсенчи темиçе вунă предприятие срокран темиçе уйăх малтан хута янă. Украинăн хĕвеланăç районĕсенче те пирвайхи сахăр завочĕсене ĕçе янă.

Мĕн пурĕ 125 сахăр заводне юсаса пĕтернĕ. Вăл заводсем фронт тата халăх валли темиçе çĕр пин центнер сахăр панă та ĕнтĕ. (ТАСС).

Ленин пурăннă вырăнсенче

Куйбышев хулинче, Рабочи урамĕнче икĕ хутлă йывăç çурт ларать. Ун çинче çыпăçтарнă шурă мрамор çине ытлăн саспаллисемпе 1889—1893 çулсенче вăл çуртра Владимир Ильич Ленин пурăннине çинчен çырса хунă.

Ильич Самарта пурăннипе тата унăн ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан историллĕ вырăнсене Куйбышев çыннисем чи хаклă янăлана упранă пек упраççĕ. Ленин çуртне-музейне çур миллион çын ытла пырса кайнă. Ильич çуралнăранпа 75 çул тултарнă май, Ленин пурăннă вырăнсене каякан экскурсисене пиншер çын çĕнĕрен хутшăнаççĕ.

Курма пыракансем Ильичăн ĕç пуçĕмĕнче нумай вăхăт хушши чарăнса тараççĕ. Кунта пӳртри янăласене Ленин ĕçленĕ вăхăтри пекех вырăнаçтарса лартнă. Кровать, çыру сĕтелĕ, сĕтел çинче прибор тата шут выртать. Юнашар—кĕнекепе журналсен этажерки.

Экскурсантсен ушкăнĕсем Веннек урамĕпе Революци площадĕ кĕтеслинчи 70-мĕш номер çурт умĕнче чарăнса тараççĕ. Çурт çине çапса хунă мемориальнăй хăма çакна пĕлтерет: «1892—1893-мĕш çулсенче ку çуртра, Самарти Округ судĕнче защитник пулса, Владимир Ильич Ленин ĕçленĕ».

Куйбышев хулинчен 50 километрта ларакан Алакаевка ялĕнче çак кунсенче ытти çĕрсенчен пынă темиçе çĕр çынна курма пулать. Ял варринче сăрт çинче пысăк мар пĕр хутлă çурт ларать. Унта В. И. Ленин çуллахи вăхăтра çемьипе пĕрле Самартан пынă. Халĕ унта Ленин музейĕ.

В. И. ЛЕНИНА АСĂНСА КĂЛАРНĂ ПОЧТА МАРКИСЕМ

В. И. Ленин çуралнăранпа 75 çул тултарнă май СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ почта маркисем çĕнĕрен кăларать: «В. И. Ленин «Правда» хаçат вулать», «В. И. Ленин хăйĕн кабинетенче», «В. И. Ленин трибуна çинче», «В. И. Ленин «Кремльте çӳрет» тата В. И. Ленин портречĕ. Ӳкерчĕксене Сталинла премин лауреачĕ Н. Н. Жуков художник тунă.

Çĕнĕ маркăсем 30, 50, 60 пуслăхăсем тата пĕр тенкĕлĕххисемпе 3 тенкĕлĕххисем пулаççĕ. (ТАСС).

ЛЕНИН ÇИНЧЕН

Чăвашгосиздат вырăс писателĕн А. Кононован «Ленин çинчен» çырнă кĕнекине чăвашла куçарса пичетеме панă. Кĕнекере пурĕ 23 калав. Вĕсене пурне те кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă.

Совет Союзёпе Польша Республики хушшинче туслăх, пёр-пёрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пёр-пёринпе килёштерсе ёçлесси çинчен Договор туса алă пусни

Юлашки кунсенче, Польша Республикин Халăх Совечён Президенчё Б. Берут господинпа Польшăн Премьер-Министрё тата Ют çёршыв ёçёсен Министрё Э. Осубка-Моравский господин Мускавра пурăннă вăхăтра, Совет Правительствипе Польшăн Вăхăтлăх Правительстви хушшинче туслăх, пёр-пёрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пёр-пёринпе килёштерсе ёçлесси çинчен Договор туса алă пусасси пирки калаçусем пулса иртнё.

Çав калаçусем, пёр-пёрне чёререн кăмăлласа пёр-пёрне ăнланнипе пулса иртнёскерсем, икё çёршывё те, ытти Пёрлешнё Нацисемпе пёрле кёрешсе, гитлерла Германие хăвăртрах тата татăклăнах çёмёрсе тăкма хатёр пулнине, çаван пекех тата СССР Союзёпе Польша хушшинчи çыхăнусенче пулнă улшăнăва вăрçă хыççăнхи тапхăрта та çирёплетсе хăварма, совет халăхёпе Польша халăхё Германи захватчикёсене хирёç пёрле кёрешнё вăхăтра пулнă туслăха малалла тёреклетсе тата аталантарса пыма икё çёршывё те хатёр пулнине кăтартса панă.

Калаçусем ССР Союзёпе Польша хушшинче туслăх, пёр-пёрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пёр-пёринпе килёштерсе ёçлесси çинчен апрелён 21-мёшёнче Договор туса алă пуснипе вёçленнё.

Договора Кремльте СССР Халăх Комиссарёсен Совечён Председателё И. В. Сталин тата Польша Республикин Вăхăтлăх Правительстви Премьер-Министрё тата Ют çёршыв Ёçёсен Министрё Э. Осубка-Моравский алă пуснă.

Договора алă пуснă чухне СССР Верховный Совет Президиумён Председателё М. И. Калинин тата Польша Республикин Халăх Совечён Президенчё Берут господин пулнă.

Кунсăр пуçне, Совет Союзё енчен çаксем пулнă: Украина ССР Совнаркомён Председателё Н. С. Хрущев, СССР Оборона Халăх Комиссарён заместителё Н. А. Булганин, СССР Ют çёршыв Ёçёсен Халăх Комиссарён заместителё А. Я. Вышинский, СССР Союзён Польшăри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолё В. З. Лебедев, СССР Наркоминделён 4-мёш Европа Отделён Заведующийё А. А. Лавришев, Совет Союзён Польшăри Çар Миссийён Начальникё С. С. Шатилов генерал-лейтенант, С. Т. Базаров, М. Г. Грибанов пулнă.

Польша Республики енчен Договора алă пуснă чухне çаксем пулнă: Премьер-Министр заместителё В. Гомулка господин, Польша Çарён Главнокомандующийё М. Роля-Жимерский генерал-полковник, Промышленность Министрё Минц господин, Польша Республикин ССР Союзёнчи Посолё З. Модзелевский господин, Халăх Совечён Президиум членё В. Ковальский господин, Ют çёршыв Ёçёсен Министрён заместителё Я. Берман господин, Польша Патриочёсен Союзён Главнăй Управленийён Председателё В. Васильевская, Польша Çарён Главнокомандующин заместителё М. Спыхальский генерал-майор, Польша Республикин Посольствин 1-мёш Секретарё Ольшевский господин пулнă.

Договора алă пуснă чухне И. В. Сталин тата Э. Осубка-Моравский сăмахсем калана.

Аллăрахра Договор текстне пичетлет пёр.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзёпе Польша Республики хушшинче туслăх, пёр-пёрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пёр-пёринпе килёштерсе ёçлесси çинчен тунă

Д О Г О В О Р

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзён Верховный Совет Президиумё тата Польша Республикин Халăх Совечён Президенчё,

немёç захватчикёсене хирёç пыракан вăрçăра пёрле кёрешсе ăна пётёмёшпех тата татăклăнах вёçне ситерме йышăнса;

Германи империализмне хирёç пёрле кёрешнё вăхăтра ССР Союзёпе Польша хушшинчи çыхăнусен историйёнче пулнă татăклă улшăнăва çирёплетсе хăварас тесе;

Совет Союзёпе унăн кўршi Польша хушшинчи ырă кўршёллё çыхăнусемпе туслăха малалла тёреклетсе пыни совет халăхёпе Польша халăхён пурнăç интересёсемпе килёпсе тăнине шанса тăрса;

Совет халăхёпе Польша халăхё туслă пулни тата тачă пёрлешсе ёçлени икё çёршывне те вăрçă вăхăтёнче те, вăрçă хыççăн та экономика тёлёшпе ăнăçлăн аталанса пыма пулăшассине ёненсе тăрса;

вăрçă хыççăн халăхсем хушшинчи мирпе хăрушсăрлăха пур майсемпе те çирёплетме тăрăшса;

çўлте калана тёллевсене шута илсе, çак Договора туса алă пусма йышăнчёç тата хăйсен Уполномоченнăйёсем пулма çаксене уйăрчёç:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзён Верховный Совет Президиумё — **Иосиф Виссарионович Сталина**, СССР Халăх Комиссарёсен Совечён Председательне;

Польша Республикин Халăх Совечён Президенчё — Эдвард **Осубка-Моравскине**, Польша Республикин Министрсен Совечён Председательне тата Ют çёршыв Ёçёсен Министрне.

Уйăрнă Уполномоченнăйсем, хăйсен полномочийёсем çинчен пёр-пёрне пёлтерсе, вăл полномочисене тивёçлипе йёркелесе панине пăхăртнă хыççăн, çакăн пирки калаçса татăлчёç:

1-мёш статья.

Калаçса татăлакан Аслă Енсем, мёнпур Пёрлешнё Нацисемпе пёрле кёрешсе, Германие татăклăн çёнтерничченех малалла çапăçёç. Калаçса татăлакан Аслă Енсем çак кёрешўре пёр-пёрне вăрçă вăрçас тата ытти тёлёшпе хăйсен мёнпур майёсемпе усă курса пулăшма пулаççё.

2-мёш статья.

Совет халăхёпе Польша халăхён хăрушсăрлăх тата малалла ўссе пырас нитересёсем вăрçă хыççăнхи тапхăрта та çак çёршывсен çирёп те яланхи туслăхне сыхласа хăварма тата вăйлатса пыма хушнине шанса тăрса, Калаçса татăлакан Аслă Енсем икё çёршыв хушшинчи туслă çыхăнусене пёр-пёрин никама пăхăнманлăхёпе суверенитетне хисепленин, çаван пекех тата пёр государстви теприн шалти ёçёсене хутшăнас маррин принципёсем хушнă пек çирёплетсе пыраççё.

3-мёш статья.

Германи енчен, е Германипе тўрремёнех е мёнле те пулин урăхла майпа вăрçă вăрçма пёрлешекен ытти государство енчен тепёр хут агресси пулас хăрушлăха сирсе ярас тесе, Калаçса татăлакан Аслă Енсем Германие хирёç пыракан хальхи вăрçă пётсен те хăйсен мёнпур майёсемпе усă курса пёрле кёрешме пулаççё.

Çак тёллеве пурнăçа кёртес тесе, Калаçса татăлакан Аслă Енсем халăхсен мирёпе хăрушсăрлăхне сыхласа усрас енёпе пулса пыракан пётём тёнчери пур ёçсене те пёр-пёринпе чёререн килёштерсе хутшăнёç, çав пысăк тёллевсене пурнăçа кёртес ёçе хăйсен тўпине пётёмёшпех хывёç.

Калаçса татăлакан Аслă Енсем çак Договора пурнăçа кёртесси пётём тёнчери принципсемпе, вёсене йышăннă чухне Калаçса татăлакан икё Аслă Енё те пулнă пулсан, пётёмёшпех килёпсе пырё.

4-мёш статья.

Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пёрин вăрçă хыççăнхи тапхăрта Германи хăйён агрессиллё политикине тепёр хут çёкленнине пула вăрçă ёçне ирёксёрех хутшăнмалла пулас пулсан, е тата Германипе тўрремёнех е мёнле те пулин урăх майпа пёрлешсе вăрçă пуçласа янă мёнле те пулин урăх государствăпа вăрçмалла пулас пулсан, Калаçса татăлакан тепёр Аслă Енё вăрçа хутшăннă енне вăрçă ёçёсенче тата ытти ёçре хăйён мёнпур майёсемпе усă курса çийёнчех пулăшу парать.

5-мёш статья.

Калаçса татăлакан Аслă Енсем пёр-пёринпе килёшмесёр Гитлер правительствине те, Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен кашнин никама пăхăнманлăхё, территорийё е хăрушсăрлăхё çине тапăнакан е тапăнма пултаракан Германири кирек мёнле урăх вăрçа та перемири е мирлё Договор тумăпăр тесе сăмах парассё.

6-мёш статья.

Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен кашниех Калаçса татăлакан тепёр Аслă Енне хирёç пыракан кирек те мёнле союз тумăп тесе тата кирек те мёнле коалицие хутшăнмăп тесе сăмах парать.

7-мёш статья.

Калаçса татăлакан Аслă Енсем хальхи вăрçă пётнё хыççăн та икё çёршыв хушшинчи экономикăллă тата культурăллă сыхăнусене малалла аталантарса тата тёреклетсе пырас шутпа килёштерсе ёçлёç тата пёр-пёрне хуçалăха юсаса ура çине тăратма пулăшса пырёç.

8-мёш статья.

Çак Договор ăна алă пуснă вăхăтран пуçласа вăя кёрет тата ăна май пур таран кёске срокра ратификацилемелле. Ратификаци грамотисене Варшава хулинче май пур таран хăвăртрах улăштарса илеççё.

Çак Договор ăна алă пуснă хыççăн çирём çул хушши вăйра пулать. Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пёри çак çирём çуллă тапхăр вёçёнче срок тухиччен вуникё уйăх малтан Договора пăрахăçа кăларма кăмăллани çинчен пёлтермесен, Договор малашнехи пилёк çуллăха вăйра юлать, çапла вара, Калаçса татăлакан Аслă Енсенчен пёри пилёк çуллăх срок тухиччен вуникё уйăх малтан Договора пăрахăçа кăларасси çинчен çыру çырса асăрхаттармасан, Договор кун хыççăн та татах пилёкшер çуллăха вăйра юлса пырать.

Çакна çирёплетсе, Уполномоченнăйсем çак Договор çине алă пуснă тата хăйсен пичечёсене хунă.

Договора Мускав хулинче, 1945 çулхи апрелён 21-мёшёнче, икё экземпляр çырса хатёрленё, кашниех вырăс чёлхипе тата поляк чёлхипе çырнă. Вёсенчен икё текстчё те пёр пекех вăйра пулаççё.

ССР Союзён Верховный Совет Президиумё хушнипе
И. СТАЛИН.

Польша Республикин Халăх Совечён Президенчё хушнипе
З. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ.

И. В. Сталин юлташ сăмахё

Президент господин, Премьер-Министр господин, господинсем!

Эпё çапла шутлатăп: Совет Союзёпе Польша хушшинче туслăх, пёр-пёрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пёр-пёринпе килёштерсе ёçлесси çинчен тунă Договор, эпир халё кăна алă пуснăскер, историллё пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çав Договорăн пёлтерёшё, пуринчен малтан, çакăнта: вăл Германие хирёç, пёрлёхшён пыракан хальхи кёрешўре Совет Союзёпе Польша хушшинчи çыхăнусем союзпа туслăх еннелле тёпренех улшăнинпе палăртса тăрать, çав улшăнăва халё ёнтё çак Договорта формально çирёплетсе хунă.

Пирён çёршывсем хушшинче юлашки пилёк ёмёр тăршшёнче пёр-пёринчен ютлăнасси, пёр-пёрин çине туслă мар пăхасси чылай пулнă тата тўрремёнех вăрçăлă хирёçўсем те сахал мар пулнă. Пёр-пёрин çине çаван пек пăхни пирён икё çёршыва та вăйсăрлатнă тата немёç империализмне вăйлăтнă.

Çав Договорăн пёлтерёшё çакăнта: вăл пирён çёршывсем хушшинчи çав кивё çыхăнусене пётерсе тупăка чиксе хурать тата туслă мар кивё çыхăнусене Совет Союзёпе Польша хушшинчи союзлă та туслă çыхăнусемпе улăштарма чăн-чăн никёс хывать.

Юлашки 25—30 çул хушшинче, урăхла каласан, пётём тёнчери юлашки икё вăрçă хушшинче, немёçсем Польша территорийёпе хёвелтухăçнелле тапăнса кулмелли коридор вырăнне тата Совет Союзё çине тапăнмалли трамплин вырăнне усă курма пултарчёç. Çакă вăл пирён çёршывсем хушшинче ун чухне туслă та союзлă çыхăнусем çук пирки çаван пек пулма пултарнă. Польшăн кивё пуçăхёсем Совет Союзёпе союзлă çыхăнусем çитасшăн пулман. Вёсем Германипе Совет Союзё хушшинче выляс политикăна малти вырăна хунă. Паллах, вёсем çаван пек выля-выля вăйăран вăкăр кăларчёç... Польшăна немёçсем оккупацилерёç, унăн нимёçсем çав Договора алă пусассине тўсеймесёр кётсе тăнинчен тёлёнмелли çук. Вёсем çав Договор демократиллё çёнё Польшăн никама пăхăнманлăхён, ун вăй-хăвачён, вăл ўссе чечекленессин шанчăкё пулса тăнине туяççё.

Анчах ёç çавăнпа кăна пётмест-ха. Çак Договор пётём тёнчере те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирён çёршывсем хушшинче союз çук чухне Германи пирён хушăра пёрлёхлё фронт çуккипе усă курма пултарнă, Польшăна Совет Союзне хирёç тăратма е тепёр майлă тума, çапла вара вёсене пёчченшерён пыра-пыра çапма пултарнă. Пирён çёршывсем хушшинче союз пулса тăрсан, ёç тёпренех улшăнчё. Халё ёнтё пирён çёршывсене пёр-пёрне хирёç тăратма çук. Халё ёнтё пирён çёршывсем хушшинче, Балтикăран пуçласа Карпат тăвёсем патне çитиччен, пётёмёшлё тăшмана хирёç, немёç империализмне хирёç пёрлёхлё фронт пур. Халё ёнтё немёç агрессине хёвелтухăçёнчи хупăрласа лартнă тесе шанчăклăнах калама пулать. Иккёленмелли çук: хёвелтухăçёнчи çав барьер çумне хёвеланăçёнчи барьера хушсан, урăхла каласан, пирён çёршывсемпе пирён хёвеланăçёнчи союзниксем хушшинчи союза хушсан, немёç агрессине çаварлăхланă тесе тата ăна иртёхсе кайма çăмăл пулмасть тесе кăмăллăнах калама пулать.

Çавăнпа та ирёклёхе юратакан написем тата, пуринчен малтан славян халăхёсем, çак Договора тăвассине тўсеймесёр кётсе тăнинчен тёлёнмелли çук, мёнпён тесен вёсем çак Договора тунине Европăри пётёмёпле тăшмана хирёç Пёрлешнё Нацисен пёрлёхлё фрончё çирёпленнине кураççё.

Çавăнпа та эпё пирён хёвеланăçёнчи союзниксем çак Договора саламласси пирки иккёленместёп.

Ирёклё те никама пăхăнман демократиллё Польша сывă пулса пурăнтăр!

Упăн хёвелтухăçёнчи кўрши — пирён Совет Союзё сывă пулса пурăнтăр!

Э. Осубка-Моравский господин сăмахё

Господин — Верховный Совет Президиумён Председателё!

Господин—Халăх Комиссарёсен Совечён Председателё!

Господинсем!

ССР Союзёпе Польша хушшинче туслăх, пёр-пёрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пёр-пёринпе килёштерсе ёçлесси çинчен калакан Договора паян алă пусни поляк халăхё немёç захватчикёсене хирёç пыракан пётёмёшлё кёрешўре çуралнă туслăха, пёр-пёрне пулăшассине тата пёр-пёринпе килёштерсе ёçлессине малалла тёреклетсе пыма пёр пăркаланмасăр хатёр тăнине тата унăн ёмёчёсене çирёплетсе пани пулса тăрать.

Çаван пек туслăн та пёр-пёринпе килёштерсе ёçлес ёмётпе кăмăл-туйăм историпён кирлё пулнă, кирлё пулса тăрать те, анчах çав ёмётпе кăмăл-туйăма пурнăçлама халё кăна, пирён çёршывра халăх сасă илсен кăна, май пулса тăчё.

Политикăллă ырă идея—пирён славян халăхёсем туслă пурăнас идея çёршер çул хушши аталанса пынă, анчах та немёç оккупанчёсем хăратса тăнине пула кăна, пирён государствăна халăх пурнăçёпён пыракан кёрешўре кăна вăл Польша демократийёпе поляк халăхне чёрёлсе ура çине тăма май паракан фактор пулчё.

Паянтан малалла çав политикăллă ырă идея пирён тулашри ёçсен политикине малашне тăтăшах ертсе пырё, мёнпён тесен пирён государство ăсё çаван пек тума хушать, мёнпён тесен вăл пирён халăхсен пёрлехи хёрўллё ёмёчёпе шухăш-кăмăлне палăртса тăрать тата пирён яланхи пёрлёхлё интерессенчен тухса тăрать.

Пирёнпён историллё ёç пулса тăракан çак Договорăн никёсё пирён халăхсем хăйсен пурнăçне пёрле хўтёлени пулса тăрать, мёнпён тесен пирён халăхсене историре нимёç кётёвёсен тискерлёхё пёр хутчен мар хăратнă. Çаван пекех çак Договорăн никёсё эпир Европăри мире сыхласа усрама тата çирёплетме пёрлёхлён интереслённи, пирён халăхсем пёрпёринпе телейлён килёштерсе ёçлеме интересленни пулса тăрать.

Эпир, çак Договора алă пусса, Пёрлешнё Нацисем пётёмёшлё хăрушсăрлăхшăн кёрешнё çёрте пёрлёх тăвас ёçе хамăр енчен парне кўретпёр тесе çирёп шанса тăратпăр.

Историре халиччен немёç халăхё, Европăри мире пăсса, тискер вăрçăсемпе мёнпур халăхсене, уйрăмах славян халăхёсене шутсăр нумай сиен кўнё пулсан, халё çав славян халăхёсем хушшинче яланлăха çуралакан союз немёç агрессине хирёç ёмёрлёхе тăрё тата Европăри мирён никёсё пулё.

Немёç оккупацийён тамăкё витёр тухнă поляк халăхё çак вăрçăра хăрушла çухатусем тўсрё, тепёр енчен вăл Аслă Совет халăхё туслăн пулăшнине туйса тăнă тата халё те тăтăшах туйса тăрать. Поляк халăхё çак Договора, политикăллă аслă çитёнўе вырăнне хурса, яланлăх мирпе хăрушсăрлăх шанчăкё вырăнне хурса, хăйён ирёклёхёпе никама пăхăнманлăхён шанчăкё вырăнне хурса, йышăнё.

Сывă пултăр Аслă Совет Союзё!

Сывă пултăр никама пăхăнман демократиллё Польша!

В. М. Молотов Вашингтона çитнё

НЬЮ-ЙОРК, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Паян 17 сехет те 46 минутра Вашингтон хулинне самолетпа СССР Ют çёршыв Ёçёсен Халăх Комиссарё В. М. Молотов юлташ çитнё.

Аэродромра В. М. Молотов юлташа çаксем хирёç тухса кётсе илнё: США-н государство Секретарё Стеттиниус господин, СССР-ăн США-ри Посолё Громыко юлташ тата Совет посольствин составё, США-н Совет Союзёнчи Посолё Гарриман господин, Англин СССР-ти Посолё Кларк Берр господин, США-н Государство Секретарён Помощникё Дани господин тата официальнăй ытти çынсем пулнă.

В. М. Молотов юлташ пырса çитессине аэродрома Америкăпа ют çёршыв корреспонденчёсен тата кинооператорсен пысăк ушкăнё кётсе тăнă.

Хёвеланăç Европăри вăрçă ёçёсем

ФРАНЦИ ÇАРЁСЕМ ШТУТГАРТ ХУЛИНЕ ЙЫШĂННА

ЛОНДОН, апрелён 21-мёшё. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйёсен верховнăй командованийён штабё пичетлесе кăларнă пёлтерўре çапла каланă: союзниксен Голландире кёрешекен çарёсем, тăшман хытă хирёç тăрать пулин те, Барневельд хулинчен хёвеланăçнерехри секторта малалла кайнă.

Бремен хулинчен хёвеланăçнерехре союзниксем Дельменгорста туртса илнё те Бремен хулине хупăрласа илнё унка тата хытăрах хёснё. Везер шывёнчен хёвелтухăçнерехре союзниксен танковăй чăçёсем Ротенбург хулинчен çурçёртерехри чугун çула татнă та Гамбург хулине Бремен хули хушшинчи автомагистраль тăрăх 32 километр ытла малалла кайнă. Халё вёсем Цевен хули патне çитнё. Ку хула Бремен хулипе Гамбург хули хушшинчи çурма çулта ларать.

Союзниксен танковăй чăçёсем Гамбургран кăнтăртарахра ларакан Гарбург хулипе пёрлешсе ларнă ялсем патне çитсе тухнă, хăйсен Эльба шывё çинчи плацдармне асăлатнă. Брауншвейг хулинчен çурçёр-хёвелтухăçнерехре нимёçсем пёр дивизине яхăн вăйпа контратака тунă. Союзниксем çав контратакăна сирсе янă. Унтан союзниксен çарёсем, нимёçсем туртса илнё позицисене каялла илес тесе, хăйсем атака пуçласа янă.

Дессау хулинчен кăнтăртарахра союзниксен танковăй тата пехотнăй чăçёсем çапăçаççё, кунта тăшман хытă хирёç тăрать. Союзниксен пехотнăй чăçёсем Обер-Редвиц хули тулашне çитнё.

Гарп «миххи» районёнче союзниксем виçё ял тытса илнё. Штутгарт хулинчен кăнтăр-хёвеланăçнерехре ларакан Роттенбург хулинчен кăнтăр-хёвелтухăçнерехре союзниксем 9 километр çурă малалла кайнă та Фейхтвангер хулине туртса илнё.

Союзниксен çурçёр-хёвеланăç енчен наступлени туса пыракан танковăй чăçёсем 40 километр малалла кайнă, халё вёсем Омлен хули патне çитнё. Штутгарт хулине çавăрса илнё.

Германипе Швейцари чиккинчен çурçёртерехре союзниксен çарёсем Ротвель хули енче тăшман тăракан вырăна 32 километр сарлакёш фронтпа савăлланса кёрсе кайнă. Халăх пурăнакан 25 пункта ытла туртса илнё.

Союзниксен çарёсем Хёвеланăç фронтёнче апрелён 19-мёшёнче 64.667 гитлеровеца тыткăна илнё.

Жиронда шывё вăррин районёнче нимёçсем хирёç тăрса çапăçасси пуçланё пётсе ларнă. Нимёçсен командующине тата унăн штабне тыткăна илнё.

ЛОНДОН, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйёсен верховнăй командованийён штабё пичетлесе кăларнă пёлтерўре çапла каланă: союзниксен Голландире кёрешекен çарёсем, тăшман хытă хирёç тăрать пулин те, Барневельд хулинчен хёвеланăçнерехри секторта малалла кайнă.

ЛОНДОН, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйёсен верховнăй командованийён штабё пичетлесе кăларнă пёлтерўре çапла каланă тăрăх, Гарп «миххинче» нимёçсем хирёç тăрса çапăçасси пётсе ларнă. Союзниксем вăл районри чи паллă хуласенчен пёрине — Бланкенбург хулине йышăннă. Гамбург хулинчен кăнтăр-хёвелтухăçнерехре, Эльба шывё çинче ларакан Виттенберге хулинчен хёвеланăçнерехри районра союзниксен çăçёсем 15 километр малалла кайнă.

Брауншвейг хулинчен çурçёр-хёвелтухăçнерехре союзниксем Германи çарёсен тата тепёр группировкине хупăрласа илнё. Тăшман диверсанчёсем союзниксен Эльба шывё çинчи укрепленийё патне пымалли кёпере сирпётсе яма хăтланнă, анчах вёсен ёçё ăнăçман. Темиçе диверсанта ярса тытнă.

Союзниксен çарёсем Чехословакин Аш хулине йышăннă та вăл хуларан 8 километр çурçёртерехри пункта çитнё.

Нюрнберг районёнче союзниксем хăйсен тыткăна лекнё 14.000 çар çыннине иртеке кăларнă.

Рейнпа Нюрнберг хушшинчи районра пёр талăк хушшинче 11.000 çынна ытла тыткăна илнё. Апрелён 20-мёшёнче союзниксен çарёсем Хёвеланăç фронтёнче мён пурё 45.000 çынна тыткăна илнё.

ЛОНДОН, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Франции радио паян Франци çарёсем Штутгарт хулине йышăнни çинчен пёлтернё.

Франци çарёсем Рейн урлă каçнă та апрелён 21-мёшёнче Брейзах хулине йышăннă. Темиçе пин çынна тыткăна илнё. Франци çарёсем Мюльгейм патёнче Дунай шывё урлă каçнă çăçёсем Швейцари чикки патне тухнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙЕ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, апрелён 21-мёшёнче американецсен «Вёçекен крепость» йышши бомбардировщикёсем, 400 истребитель хўтёлесе пынипе, Мюнхенпа Ингольштадт хулисене тата Мюнхенран 48 километр хёвеланăçнерехре ларакан Ландсбергри аэродрома тапăннă.

Италире союзниксен çарёсем Болонья хулине туртса илнё

ЛОНДОН, апрелён 21-мёшё. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçёр тинёс таврашёнчи хёçпăллă вăйёсен штабё пичетлесе кăларнă пёлтерўре çапла каланă: апрелён 20-мёшёнче каçхине 5-мёш армин икё дивизийё Болонья хулинчен хёвеланăçнерехре По шывё улăхне çитсе кёнё. Çаван пекех тата 5-мёш армин çăçёсем Болонья хулинчен кăнтăртарахри тата кăнтăр-хёвеланăçнерехри сăртлă вырăнта малалла кайнă.

Серчо шывён улăхёнче американецсен çăçёсем Кастельнуово хулине туртса илнё.

Лигури тинёсё хёрринче союзниксен малти çăçёсем Сардзана хули патне çывхарса пыраççё.

Комаккьо кўллинчен çурçёр-хёвеланăçнерехре 8-мёш армин çăçёсем Феррара хулинчен хёвелтухăçнерехри канал патне çитнё.

ЛОНДОН, апрелён 21-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, союзниксен çарёсем Болонья хулине ирёке кăларнă.

ЛОНДОН, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçёр тинёс таврашёнчи хёçпăллă вăйёсен штабё пичетлесе кăларнă пёлтерўре çапла каланă: апрелён 21-мёшёнче союзниксен çарёсем Хёвеланăç фронтёнче мён пурё 45.000 çынна тыткăна илнё.

ЛОНДОН, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви пёлтернё тăрăх, Франции çарёсем Штутгарт хулине йышăнни çинчен пёлтерет.

Франци çарёсем Рейн урлă каçнă та апрелён 21-мёшёнче Брейзах хулине йышăннă. Темиçе пин çынна тыткăна илнё. Франци çарёсем Мюльгейм патёнче Дунай шывё урлă каçнă çăçёсем Швейцари чикки патне тухнă.

НИМЁÇСЕМ ИТАЛИН ЫЛТТĂН ЗАПАСЁН ПЫСĂК ПАЙНЕ ИЛСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, апрелён 21-мёшё. (ТАСС). АФИ агентстви пёлтернё тăрăх, Итали банкён директорё Луиджи Эйнауди çапла каланă: Италин ылттăн запасё 1941 çулхи декабрь уйăхёнче 324 тонна шутланнă, 1943 çулхи сентябрь уйăхё тёлне вăл 120 тонна кăна тăрса юлнă. Ытти пайне нимёçсем илсе кайнă.

МУССОЛИНИНЕ ТАПАННИ

ПАРИЖ, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Итали чиккинчен Итали патриочёсем Муссолинине тапăнни çинчен пёлтерет. Миланра Муссолини пурăнакан çуртра патриотсем чылай вăхăт иртсен çурăлмалли икё бомба лартнă. Анчах бомбисем Муссолини çук чухне çурăлса кайнă. Муссолини хуралёнчи икё çын вилнё.

ПЕТЭН ШВЕЙЦАРИРЕ ПЫТАНСА ПУРĂНАТЬ

ПАРИЖ, апрелён 22-мёшё. (ТАСС). «Ордр» хаçат çапла пёлтерет: шанчăклă хыпарсем тăрăх Петэнпа унăн арăмё темиçе кун хушши ёнтё Швейцари территорийёнче пурăнаççё.

ЛУИ САЙЯН КАЛАНИ

ПАРИЖ, апрелён 19-мёшё. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Нью-Йоркран пёлтернё тăрăх, хирёç тăрса кёрешекен халăх совечён председателё Луи Сайян апрелён 18-мёшёнче «Франци Франшех юлать» ятлă обществăн пухăвёнче çапла каланă: «Франци администрацийёне промышленноçёнче ку тараччченех коллаборационистсем (оккупантсемпе пёрле ёçленё çынсем) ответлă вырăнсенче ларaççё. Сайян калана тăрăх, юлашки уйăхсем хушшинче Франци правительстви «каçару политикине» тытса пырать, «немёçсемпе сыхăнса тăнă çынсем халё те пур-ха, халё вёсем американецсемпе сыхăнасшăн».

КЁСКЕН

* Белград хулинчи чи лайăх кинотеатрсенчен пёринче «Иван Грозный» ятлă совет фильмне кăтартаççё. Фильма халăх питё юратса пăхать.

* Англире вăрçă пуçланнăранпа граждансла халăх хушшинче 146.760 çын вилнё е аманнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителён — 2—89, секретарён — 4—26, парти пурнăç пайён 3—97, промышленность пайён — 3—99, ялхуçалăх пайён — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00574.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 16.000